25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 МАРТ 7 ШАМАТКУН 56(6081) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖН, ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Госпитальсенче ӗҫлекен работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче аманнӑ Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсене сиплес ӗҫре лайӑх ӗҫленӗшӗн госпитальсенче ӗҫлекен ҫак работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн хисеплӗ грамотипе наградӑламалла:

1. Таисия Михайловна **Беляевӑна** — старши медицина сестрине.
2. Ида Зиновьевна **Валка** — врача, отделени начальникне.
3. Александра Николаевна **Винокуровӑна** — общественнӑй активисткӑна.
4. Валентина Алексеевна **Доморецковӑна** — медицина сестрине.
5. Вера Григорьевна **Ефимовӑна** — врача, госпиталь начальникне.
6. Таисия Емельяновна **Емельяновӑна** — старши медицина сестрине.
7. Серафима Федоровна **Еремеевӑна** — операционнӑй старши медицина сестрине.
8. Аполлинария Давыдовна **Кабанченкона** — врача.
9. Мария Яковлевна **Кукушкинӑна** — медицина сестрине.
10. Варвара Гавриловна **Лекомина** — старши медицина сестрине.
11. Надежда Алексеевна **Лысяковӑна** — врач-ординатора.
12. Екатерина Ивановна **Муромцевӑна** — операционнӑй санитаркӑна.
13. Надежда Алексеевна **Малиничва** — шеф-повара.
14. Анатолий Михайлович **Палладина** — врача, госпиталь начальникне.
15. Капитолина Сергеевна **Полозовӑна** — врача, отделени начальникне.
16. Варвара Прокопьевна **Прокопьевӑна** — перевязочнӑй медицина сестрине.
17. Юлиана Александровна **Рябушкинӑна** — ведущи врач-хирурга.
18. Наталия Ильинична **Развалова** — врач-хирурга.
19. Павел Иванович **Сапожкова** — врач-хирурга, медицина енӗпе ӗҫлекен начальникӗн помощникне.
20. Зинаида Ниловна **Сафинскаяна** — врача, медицина енӗпе ӗҫлекен начальникӗн помощникне.
21. Тамара Михайловна **Смирновӑна** — общественницӑна, аманнисене пулӑшу парас тӗлӗшпе ӗҫлекен республикӑри комитетӑн членне.
22. Анна Игнатьевна **Троицкаяна** — старши медицина сестрине.
23. Елизавета Ивановна **Тульскаяна** — медицина сестрине.
24. Анастасия Фадеевна **Фадеевӑна** — врача, медицина отделенийӗн начальникне.
25. Василий Петрович **Флягина** — военкома.
26. Клавдия Павловна **Чарыковӑна** — общественницӑна, аманнисене пулӑшу парас тӗлӗшпе ӗҫлекен республикӑри комитетӑн членне.
27. Мария Ивановна **Челноковӑна** — санитаркӑна.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **З. АНДРЕЕВА.**

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1942 ҫулти мартӑн 3-мӗш.

Мартӑн 8-мӗш кунне тивӗҫлӗ ирттерме хатӗрленеҫҫӗ

ГОРЬКИЙ, мартӑн 5-мӗш. (ТАСС). Ленин ячӗпе тӑракан заводри работницӑсем стахановла вахтӑна тӑнӑ, вӗсем производствӑн малтанхи квартал планне тата март уйӑхӗн программине срокчен тултарассишӗн ҫине тӑрса кӗрешеҫҫӗ. Мартӑн 8-мӗш ячӗпе хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене заводри работницӑсем ҫӗнтерӳллӗн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Таня Волкова комсомолкӑн фронтовой бригади сменӑри заданине кунсерен 175 процент е ытларах та тултарса пырать. Унӑн бригадинчи работницӑсем — Климентьева, Лапина тата ыттисем те кунсерен 2-шер норма ытла тултарса пыраҫҫӗ.

Молотов ячӗпе тӑракан автозаводри прессовщица Казанцева сменӑри нормӑна пӗрмаях 300 процент таран тултарса пырать, тимӗрҫӗ Анна Мельникова кашни сменӑрах икшер норма тултарать.

* * *

САХАЛИНРИ АЛЕКСАНДРОВСК, мартӑн 5-мӗш. (ТАСС). Хӗрарӑмсен пӗтӗм тӗнчери коммунистла кунне хатӗрленнӗ май, Совет Сахалинӗнче пурӑнакан работницӑсемпе килхуҫи хӗрарӑмӗсем фронта пулӑшас ӗҫе татах та вӑйлатса ячӗҫ. Вӗсем действующи армие темиҫе пин ӑшӑ япаласем яраҫҫӗ.

* * *

НОВОСИБИРСК, мартӑн 5-мӗш. (ТАСС). Новосибирск хулинчи суднӑсем юсакан заводра ӗҫлекен работницӑсем мартӑн 8-мӗшӗнче воскресник туса ирттерме йышӑннӑ. Ҫав кун ӗҫленӗшӗн илмелли укҫана вӗсем пӗтӗмӗшпех нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи ачасене пулӑшма параҫҫӗ.

Куҫса килнӗ ачасемшӗн тӑрӑшар

Сакӑр уйӑх ытла ӗнтӗ Совет Союзӗнчи халӑхсемпе пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла йыт кӗтӗвне хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ. Гитлерла ӑстиҫуксем, ирсӗрсем Совет Союзӗнче пурӑнакан халӑхсене чура тӑвас, вӗсен ирӗкӗпе телейне туртса илес тесе, пирӗн ҫӗршыва моторлӑ тата броньӑллӑ орддисене ячӗҫ. Анчах та гитлерла вӑрӑ-хурахсем хӑйсен хура ӗмӗчӗсене нихӑҫан та пурнӑҫа кӗртеймӗҫ. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар, Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те пулӑшса пынипе, фашистсен ҫарне малалла пыма чарса лартрӗ. Чарса лартрӗ кӑна та мар, вӑл ӑна вӑйлӑн ҫапса хуҫса, минкретсе, каялла ҫавӑрчӗ. Халӗ пӗр чарӑнса тӑмасӑр, тӑшманӑн ҫыннисемпе техникине пӗтерсе пырса, хӗвеланӑҫ еннелле хӑваласа пырать. Хӗрлӗ Ҫар куллен ҫӗнӗрен ҫӗнӗ хуласемпе ялсене Гитлер пусмӑрӗнчен хӑтарса ирӗке кӑларса пырать. Час ак пирӗн тӑван ҫӗршывӑмӑрта пӗр оккупант та юлмӗ.

Пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑн хӗссе пынипе тӑшман чакать, ҫиллине шӑнараймасӑр вӑл мирлӗ халӑха асаплантарать, шалама ҫук ирсӗр ӗҫсем тӑвать, хӗрарӑмсене, пӗчӗк ачасене, ватӑ стар589ксене тӗрлӗ хӗн кӑтартса вӗлерет. Гитлерла вӑрӑ-хурахсем иртсе кайнӑ вырӑнсенче «пушӑ хир зонисемпе» ишӗлчӗксем ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Темиҫе пин ачасем ҫуртсӑр-йӗрсӗр, ашшӗсӗр-амӑшсӗр юлнӑ. Тӑшмансене пула ачасем хӗн курнине, вӗсем мӗн таран асапланнине эпир ӗмӗрне те манас ҫук. Пирӗн халӑх гитлерла бандитсене нихӑҫан та каҫарас ҫук. Вӗсен шалҫисем тулӗҫ, хӑйсен юнлӑ ирсӗр ӗҫӗсемшӗн фашистсене Хӗрлӗ Ҫар тивӗҫлипе тавӑрӗ. Вырӑссен анлӑ уйхирӗсенче ӗнтӗ фашистсем миллионшарӑн хӑйсен пуҫӗсене хучӗҫ, ҫитӗ вӑхӑт—пирӗн ҫӗршывран пӗр фашистла оккупант та чӗррӗн тухаймӗ.

Вӑрҫа пула сахал мар ҫемьесен хӑйсен тӑван ачисемпе уйӑрӑлма тиврӗ. Куҫса тухнӑ е хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсене ҫухатнӑ ачасен йышӗ сахал мар. Вӗсене аслисенче тата ачасен ҫурчӗсенче пурӑнма тивет. Эпир ҫав ачасене ашшӗ-амӑшӗсем пекех лайӑх пӑхса, куллен-кун пулӑшса пыма тивӗҫ. Большевикла парти, пирӗн совет правительстви, халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ кирек хӑҫан та ҫамрӑк ӑру ҫине ӑшшӑн пӑхса ӑна мӗн пултарнӑ таран пулӑшса пынӑ тата халӗ те пулӑшса пыраҫҫӗ. Пулас илемлӗ пурнӑҫа, гитлерла пуҫкасакансенчен ӗмӗрлӗхех тасалнӑ телейлӗ пурнӑҫа хамӑрӑн ачасем тумаллине пирӗн нихӑҫан та асран ямалла мар.

Пирӗн ҫамрӑк ӑру вӑйлӑ, таса, хурҫӑ пек ҫирӗп сывлӑхлӑ пулмалла. Ҫапла тӑвас тесен, пирӗн ачасем валли лайӑх условисем тумалла. Вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсем ачасен шухӑш-кӑмӑлӗсенче ан сиенччӗр. Эпир, Шупашкар районӗнчи «Трактор» колхоз членӗсем, хамӑр пата Мускаври Ленински районӗнчен куҫса килнӗ 26-мӗш №-лӗ ачасен садне шефа илетпӗр. Эпир хамӑр шефа илнӗ ачасен садне вӑй ҫитнӗ таран пулӑшса пыма пулатпӑр. Ачасен сачӗ валли эпир куллен 30 литр сӗт, 60 шт. ҫӑмарта парса пырӑпӑр. Пирӗн колхозниксем кашни хуҫалӑхра ачасен сачӗ валли пӗрер чӑхӑ ӳстерме сӑмах пачӗҫ. Кунсӑр пуҫне тата ачасен сачӗ валли купӑста-хӑяр, ҫӗрулми, вут-шанкӑ тӑратас ӗҫе те эпир хамӑр ҫине илтӗмӗр.

Чӑваш республикинчи пур колхозниксемпе колхозницӑсене те эпир хамӑртан пример илме сӗнетпӗр. Ачасен ҫуртне тата куҫса килнӗ ачасене кашни колхозах пулӑшу пама пултарать. Ачасен ҫине-пуҫне, урисене тӑхӑнмаллисене тупса пама, апат-ҫимӗҫ хатӗрлеме, ӑшӑ хваттере вырнаҫтарма кашни колхозӑн вӑй ҫитет. Ачасене ӑшшӑн пӑхса куллен-кун пулӑшу парса пырар, вӗсене сталинла ӑрӑва тивӗҫлӗ, тӑван ҫӗршывӑн паттӑр ывӑлӗ-хӗрӗсем, тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхне сыхлама пултаракан мухтавлӑ боецсем пулма пулӑшар.

Колхоз председателӗ ЯКОВЛЕВ.

Колхоз членӗсем: ПОРФИРЬЕВ, ЯКОВЛЕВ, СОРОКИН, СВИНЦОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 5-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Мартӑн 5-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ наступлени туса пынӑ. Фронтӑн уйрӑм участокӗсенче противник контратакӑсем туса пирӗн войскӑсем малалла куҫассине чарма хӑтланнӑ. Анчах та противник ҫынсем тӗлӗшпе те, техника тӗлӗшпе те пысӑк ҫухатусем тӳссе хӗвеланӑҫ еннелле чакнӑ. Пирӗн войскӑсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта, вӗсен шутӗнче **Юхнов хулине** (Смоленск облаҫӗ) йышӑнса илнӗ.

Мартӑн 4-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата аэродромсем ҫинче нимӗҫсен 43 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 13 самолет пӗтнӗ.

Мартӑн 5-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗҫсен 4 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Мартӑн 4-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 350 автомашинине ытла, боеприпассем турттарса пыракан 130 лавне яхӑн, горючи тултарнӑ 2 автоцистернине, 37 орудине, зениткӑллӑ пулеметсен 9 точкине, 20 минометне пӗтерсе тӑкнӑ тата сиенленӗ. Противникӑн пехотине икӗ батальона ҫити салаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн стрелковӑй часть (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) противник хирӗҫ тӑмалли ҫирӗплетнӗ пункт туса хунӑ Г. ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура нимӗҫсен 5-мӗш пехотнӑй полкне тата нимӗҫсен 21-мӗш пехотнӑй полкӗн 1-мӗш батальонне аркатса тӑкнӑ. Ҫак операцие хутшӑннӑ Дружинин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри танкистсем нимӗҫсен танкне, 3 орудине, 10 станковӑй пулеметне тата боеприпассен складне тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирне тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем питӗ нумай вырттса юлнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче кӗрешекен сывлӑшран десантла антармалли пирӗн часть юлашки кунсенчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсенне 4 оруди, 32 пулемет, 300 винтовка, 25.000 патрон, боеприпассем тиенӗ вагон, авиабомбӑсем тиенӗ 10 вагон, велосипедсем тиенӗ 1 вагон, 40 автомашина тата 100 лаша тытса илнӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 800 ҫынна ытла вӗлернӗ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн чаҫсем пырса ҫапнине чӑтса тӑраймасӑр противник халӑх пурӑнакан Н. пункта хӑварса П. пункт еннелле чакса кайма тытӑннӑ. Ҫӗрле ҫак пунктӑн районӗнче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ. Пирӗн чаҫсем, нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе, малалла наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан тепӗр 3 пункта йышӑнса илнӗ тата нимӗҫсен 6 танкӗпе 5 орудине пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн чаҫсем тытса илнӗ трофейӑсем хушшинче 5 пулемет, минометсем, танксене хирӗҫ пемелли 4 пӑшал тата икӗ батальонӑн штабӗсен документӗсем пур. Ҫапӑҫу пынӑ вырӑнта тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 650 ҫынна вӗлернӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен Н. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ противника пысӑк сиен кӳнӗ. Партизансем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 136 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ, темиҫе шпиона персе вӗлернӗ, боеприпассен 3 складне, чугунҫул ҫинчи тата шоссе ҫулӗсем ҫинчи 16 кӗпере сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн грузсемпе войскӑсем турттарса пыракан 5 поездне йӑвантарса янӑ, 12 вырӑнта телефон линине пӑснӑ тата телефон кабельне 2.400 метра ҫити татса илнӗ. Партизансен отрячӗ тӑшманӑн 2 грузовой автомашинине, 2 ҫӑмӑл автомашинине, 8 лавне, 11 мотоциклне, 6 велосипедне, йӗлтӗрсемпе тӗрлӗрен япаласем тиенӗ транспортне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче партизансем противникӑнне 2 оруди, 300 снаряд, 6 пулемет, 64 винтовка, 4 автомат тата минӑсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен обер-ефрейторӗ Вальтер Эйкерт ҫумӗнче Марта Зигер аппӑшӗ патне ҫырнӑ ҫырӑва тупнӑ. Эйкерт ҫапла ҫырать: «Вырӑссем пирки пирӗн нумай нуша тӳсме тивет. Вырӑссен самолечӗсем пирӗн тылра вӗҫсе ҫӳресе пулеметсенчен переҫҫӗ, бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ, партизансем пирӗн обозсем ҫине тапӑнаҫҫӗ, ҫулсем ҫине минӑсем хурса хӑвараҫҫӗ. Пирӗн виллекеннисем ҫав тери нумай пуласшине тата пирӗн рота ҫав тери пӗчӗкленсе юлассине эпир нихӑҫан та шухӑшламан. Вырӑссем пирӗн ҫине пӗр вӗҫӗмех тапӑнаҫҫӗ. Вырӑссем ҫӗрле атакӑсем тума питӗ юрата҆ҫҫӗ. Вӗсем пирӗн позицисем патне вӑрттӑн пырса тухаҫҫӗ те ялсене сасартӑк кӗрсе, эпир пурӑнакан ҫуртсем ӑшне гранатӑсемпе ҫӗмӗрсе кӗреҫҫӗ. Пирӗн нумай ялсене пӑрахса хӑварма тиврӗ. Мӗншӗн тесен эпир вырӑссен атакисене текех чӑтса тӑраймарӑмӑр. Эпир питӗ вӑйсӑр».

* * *

Нимӗҫсен 60-мӗш мотодивизийӗн 92-мӗш мотополкӗнчи 4-мӗш ротӑран тыткӑна илнӗ унтер-офицер Иозеф Шрайбер ҫапла каласа панӑ: «Февралӗн 17-мӗшӗнче эпӗ обозпа пӗрле батальонӑн командӑй пунктне ҫитрӗм. Пирӗн 4-мӗш пулеметнӑй рота та ҫакӑнтах пулнӑ. Тепӗр кунне пирӗн пата вырӑссен танкӗсемпе пехотинецӗсем тапса кӗчӗҫ. Пулеметнӑй ротӑна пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкрӗҫ. Унта 100 салтака яхӑн пулнӑ. Ҫапӑҫура батальон командирне, Шенберг капитана, батальон врачне, Нодель фельдфебеле т. ыт. те вӗлерчӗҫ. Батальонра 9 офицертан 5 офицер ҫеҫ юлчӗ».

* * *

Сталино облаҫӗнчи Ямск районӗнчи Варваровка ялӗнчен чакса кайнӑ чух нимӗҫсем ялти 43 ҫуртран 38 ҫуртне вут тивертсе хӑварнӑ тата минӑсем хурса сирпӗнтерсе янӑ. Гитлеровецсем пӑшалпа хӑратса ҫав ялти ҫынсене хӑйсен огневой позицийӗсем патне тупӑсем, снарядсем илсе пыртарнӑ, окопсем чавтарнӑ. Ялтан тухса кайнӑ чухне нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсем ялти 283 ҫынна вӑйпах хӑйсемпе пӗрле хӑваласа илсе кайнӑ.

* * *

Мичуринскри паровозсем юсакан заводри котельщиксем А. Свешников, Б. Розов, И. Сахновский юлташсем, оборона Халӑх Комиссарӗн Сталин юлташӑн приказӗ ҫине ответлесе, производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунӑ. Фронт валли заказ тунӑ чухне котельщиксем плана 1.109 процент тултарнӑ.

Мартӑн 6-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Мартӑн 6-мӗш. ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ активлӑн ҫапӑҫнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть, противника хирӗҫ пӗр кун хушши ҫапӑҫса, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 400 ҫынна яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ. Тепӗр участокра Незин лейтенантӑн подразделенийӗнчи артиллеристсем тӑшманӑн пысӑк чаҫӗн ҫӗрлехи контратакине сирсе пӑрахнӑ. Нимӗҫсем ҫапӑҫу хирне хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен 300 ытла виллине пӑрахса хӑварса каялла чакнӑ.

* * *

Пирӗн пӗр подразделени (Калинин фрончӗ) С. ялӗн районӗнче нимӗҫсен контратакине сирсе пӑрахнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсен 270 вилли выртса юлнӑ.

* * *

Кӗҫӗн лейтенант Ужакнов командир пулса ертсе пыракан кранoармеец-автоматчиксен группи, противника кӗтмен ҫӗртен пырса ҫапса, нимӗҫсене халӑх пурӑнакан Н. пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Темиҫе вуншар гитлеровеца вӗлернӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Тӑшмана хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче Грибачев юлташӑн подразделенийӗнчи танкистсем хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Еремин старшинан танк экипажӗ Д. ялне пырса кӗнӗ те, тупӑсенчен персе тата гусеницӑсемпе таптаса, тӑшманӑн танксене хирӗҫ пемелли 4 туппине пусарса лартнӑ, икӗ блиндажне ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине икӗ взвода ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Козулин лейтенантӑн танк экипажӗ, нимӗҫсем вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ халӑх пурӑнакан пункт ҫине пырса тапӑнса, тӑшманӑн 2 орудине пӗтерсе тӑкнӑ, 20 блиндажне, 5 автомашинине ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Смоленск партизанӗсен П. юлташ командир пулса ертсе пыракан группи 25 кун хушши кӗрешнӗ вӑхӑтра тӑшманӑн чаҫӗсем хушшинчи телеграфпа телефон ҫыхӑнӑвне 120 хут татнӑ, шоссе ҫулӗ ҫинчи пысӑк кӗпере взрыв туса сирпӗнтернӗ, горючи тултарнӑ икӗ автоцистернӑна ҫунтарса янӑ тата тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 39 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Аяларах, нимӗҫсен 257-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 257-мӗш артполкӑн 11-мӗш батарейӑри лейтенант Карл Шульц дневникӗнчи хӑшпӗр вырӑнсене илсе кӑтартатпӑр:

«**Январӗн 24-мӗш.** Вырӑссем пирӗн позицисем ҫине артиллерирен питӗ тӗл переҫҫӗ. Пирӗн убежищӗне снаряд пырса ӳкрӗ... Пӗррӗмӗш дивизиона пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ, вӑл ӗнтӗ текех ҫук. Майор Визер командир пулса ертсе пыракан 457-мӗш пехотнӑй полка вырӑссем ҫавӑрса илнӗ. Танковӑй дивизиона ҫапса аркатнӑ. Вуннӑмӗш батарейӑна аркатса тӑкнӑ. Ҫынсем енӗпе ҫухатусем мӗн чухлӗ пулнине тӗплӗнех палӑртман-ха.

Январӗн 25-мӗш. Ҫывӑхрах пӑшал сасси янӑраса кайрӗ. Юнашар ҫуртра ларнӑ вахмистр Битлер тӳрех виллӗ... Пирӗн ҫапса аркатнӑ дивизин кунҫулне пӗлес килет.

Январӗн 29-мӗш. Лару-тӑрӑва палӑртман-ха. Вӑрттӑн документсене пӗтерсе тӑкнӑ. 3-мӗш дивизион штабӗнче ӗҫлекен Франц Ванкер хӑрушӑ япаласем ҫинчен каласа пачӗ...

Январӗн 31-мӗш. Ирхине вырӑссем наступлени пуҫласа ячӗҫ. Питӗ хӑрушӑ, вырӑссем кулахай енчен те, сылтӑм енчен те питӗ инҫете кӗрсе кайнӑ.

Февралӗн 2-мӗш. Каҫхине вырӑссем виҫӗ енчен наступлени пуҫласа ячӗҫ.

Февралӗн 6-мӗш. Апат-ҫимӗҫ тӑрасси начарлансах пырать. Нимӗн те кӳрсе килмеҫҫӗ».

* * *

Калинин облаҫӗнчи Погорелое районӗнчи Ульянов ялӗнчен тухса кайнӑ чух гитлерла бандитсем 117 ҫурта, 4 шкула, клуба, йӗтӗн заводне, ачасен 2 ҫуртне, больницӑна, аптекӑна, 2 пекарньӑна, ветеринари больницине, магазина, почтӑна тата ытти учрежденисемпе предприятисене вут тивертсе ҫунтарса янӑ. Фашистла бандитсем ялти ҫынсен тумтирӗсене, апат-ҫимӗҫне, кӗпи-йӗмӗсене, савӑт-саписене тата килти ытти япалисене те туртса илнӗ.

* * *

Томск чугунҫулӗ ҫинчи Кемерово станцинчи таварсем тиекен пунктри грузчицӑсем хӑйсен ӗҫ нормине икӗ хут ҫурӑ ирттерсе тултараҫҫӗ. Грузчица Виноградова юлташ ҫак кунсенче сменӑри задание 2.000 процент тултарнӑ.

Юхнов хулине илни

ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, мартӑн 5-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Совет Информаци Бюровӗ паян пирӗн войскӑсем Юхнов хулине йышӑнса илни ҫинчен пӗлтерчӗ. Юхнов хулишӗн пулнӑ ҫапӑҫусем ҫинчен тӗплӗнрех каласа парӑпӑр.

Нимӗҫ захватчикӗсем Юхнов районне хӑйсен оборонин хирӗҫ тӑмалли вӑйлӑ пункчӗсенчен пӗри туса хунӑ. Нимӗҫсем Юхнов таврашӗнчи 12—15 километрти пур ялсене те ҫирӗплетнӗ фортсем туса хунӑ. Кашни ял таврах вӗсем юра пӑрлантарса хӳмесем тунӑ, темиҫе йӗрке пралук картасем тытнӑ. Юхнов таврашӗнчи ялсенчи уйрӑм ҫуртсене те пӑрлантарнӑ юр хӳмепе ҫавӑрнӑ. Кашни ял хирӗҫ тӑмалли вырӑн, кашни ҫурт огневой точка пулса тӑнӑ.

Хӑшпӗр вырӑнсенче, 3 километр тӑршшӗ участокрах, нимӗҫсем йывӑр минометсен 12 батарейине, темӗн чухлӗ орудине, пулеметсене тата ытти тӗрлӗ огневой средствисене вырнаҫтарса лартнӑ. Ҫирӗплетнӗ районта Юхнов хули патне пымалли пур ҫулсене те вӑйлӑн персе тӑма малтанах хатӗрлесе хунӑ. Ҫирӗплетнӗ пунктсем хушшине пулеметсенчен, минометсенчен, тупӑсенчен фланг тӑрӑх пенипе хӳтӗлесе тӑнӑ.

Кунта нимӗҫсем Германирен, Францирен, Чехословакирен тата хӑйсем оккупациленӗ ытти ҫӗршывсенчен те хӑйсен резервӗсене васкасах транспорт самолечӗсемпе кӳрсе килнӗ. Анчах та совет войскисен наступленине нимӗн те тытса чарма пултарайман. Пирӗн боецсем тӑшманӑн ҫирӗплетнӗ линийӗсене аркатса, Юхнов хулипе районне штурмлама тытӑннӑ. Тӑшман, кашни огневой рубежрах чарӑнса тӑма хӑтланса, хӑйӗн мӗншур тупписенчен тӑвӑллӑн пенӗ, анчах та унӑн ӗҫ тухман.

Совет войскисем нимӗҫсен Юхновра тӑракан чаҫӗсене ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапнӑ пирки, тӑшманӑн, ҫапӑҫу хирӗнче хӑйӗн салтакӗсемпе офицерӗсен виллисене, автомашинисене, орудийӗсене, танкӗсене, снарядӗсемпе патронӗсене шутсӑр-мӗнсӗр пӑрахса хӑварсах, хӗвеланӑҫ еннелле тарма тивнӗ. Фронтӑн 2 километр тӑршшӗ пӗчӗк участокӗнче кӑна нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗҫсен ҫухатӑвӗсем татах та пысӑкрах. Хула таврашӗсенче те, урамсенче те тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем йӑваланса выртаҫҫӗ. Ҫул ҫинче тӑшман пӑрахса хӑварнӑ автомашинӑсене, танксене, орудисене, минометсене, пулеметсене тата урӑх тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсене те темӗн чухлӗ курма пулать. Слобода ялӗнче нимӗҫсем хӑйсен госпитальре выртакан аманнӑ вуншар салтакӗсемпе офицерӗсене пӑрахса хӑварнӑ.

Юхновшӑн пынӑ ҫапӑҫура уйрӑмах Пьянников сержантӑн пулеметнӑй взвочӗ палӑрнӑ. Хӑрама пӗлмен совет пулеметчикӗсем тӑшманӑн 14 контратакине сирсе пӑрахнӑ, нимӗҫсен фашистла йыткӗтӗвӗсене питӗ пысӑк сиен кӳнӗ. Старши лейтенант Тепляков темиҫе хутчен атакӑна кӗрсе кайнӑ, аманнӑ пулин те ҫапӑҫу пӗтиччченех вӑрҫӑ хирӗнчен тухман, хӑйӗн боевой постне пӑрахса хӑварман. Тимошкин юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсен группи нимӗҫсене 50 метр ҫывӑха янӑ та вӗсене персе пӑрахма тытӑннӑ, фашистсем, питӗ пысӑк ҫухатусем тӳссе, тарнӑ.

Тӑшман Юхнов хулинчен васкасах чакса тухнӑ. Чухне хулана вут тивертсе ҫунтарма, боеприпассен складӗсене сирпӗнтерме тытӑннӑ. Анчах та вӑл хулана пысӑк сиен кӳме ӗлкӗреймен, пирӗн боецсем хӑвӑрт пырса ҫапнипе пула фашистсем паникӑна ӳксех хуларан тарнӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫ оккупанчӗсене подвалсемпе ҫуртсенчен ҫапа-ҫапа кӑларнипе пӗр вӑхӑтрах пушарсене сӳнтернӗ, совет граждӑнӗсен кил-ҫурчӗсемпе пурлӑхӗсене ҫӑлнӑ.

И. ГРИБОВ.

Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗ

СОВЕТСКОЕ. Мартӑн 5-мӗшӗнче ялхуҫалӑх ӗҫӗнче малта пыракансен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура пурӗ 90 ҫын пулчӗ тата Элӗкпе Хӗрлӗ Чутай районӗсенчен представительсем килнӗ.

Канашлӑвӑн кун йӗркинче иртнӗ ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсен итогӗсемпе кӑҫалхи ҫуракине хатӗрленес ыйтусем тӑчӗҫ. Малта пыракан колхозсем хӑйсен паха ӗҫӗсене палӑртса хӑварчӗҫ, ҫитменлӗхсене тишкерсе тухса, колхозсем умӗнче халь тӑракан пысӑк задачӑсене сӳтсе яврӗҫ.

Канашлу активлӑн иртрӗ. Тухса каласнисем тӑрӑх, районри малта пыракан колхозсем иртнӗ ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса ирттернӗ. «1-ое Мая», «Крестьянская газета» т. ыт. колхозсем уйри тырпулсене тӑккаламасӑр пухса кӗртрӗҫ, авӑнсене вӑхӑтра ҫапса пӗтерчӗҫ, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ. Районра 17 колхоз, 19 бригада, 28 звено пӗрчӗллӗ тырӑсем туса илес плана ытлашшипех тултарнӑ. Ҫавӑн пекех, техникӑллӑ культурӑсем тӑрӑх та 9 колхоз, 13 бригада, 21 звено лайӑх ӗҫленӗшӗн хушса илеҫҫӗ. «За коммунизм» тата «Сеятель» колхозсем гектартан планпа 13,5 центнер тӗштырӑ туса илмелле пулнӑ пулсан, вӗсем 16 центнер ытла туса илнӗ. Уйрӑм культурӑсем тӑрӑх «Сеятель» колхоз гектартан ыраш 19 центнер, ҫӗрулми 22 центнер таран туса илнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре те «Сеятель» колхозра аван ӗҫлеҫҫӗ. Сӑмахран, кашни сысна аминчен 23-шер ҫурӑ илсе ҫитӗнтернӗ. Халь колхоз ҫуракине хатӗрленсе ҫитрӗ.

Ҫакнашкал лайӑх ӗҫленӗ колхозсемпе пӗрлех, районра пачах ҫителӗксӗр ӗҫлекен колхозсем те пур. Вӗсем иртнӗ ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене те тивӗҫлӗн туса пымарӗҫ, халь ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе те начар ӗҫлеҫҫӗ. Канашлура ҫакнашкал начар ӗҫлекен колхозсен ӗҫӗсене хытӑ тишкерчӗҫ, малта пыракан колхозсем, хӑйсем ҫине татӑклӑ обязательствӑсем илсе, районри пур колхозсене те хӑйсем пек ӗҫлеме чӗнсе каларӗҫ.

Я. СИГАЕВ.

Иртнӗ ҫулти ӗҫсене пӑхса тухрӗҫ

ҪӖРПУ. Иртнӗ кунсенче МТС совечӗн канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура политотделӑн начальникӗ Я. Лукин МТС-ӑн иртнӗ ҫулхи ӗҫӗсемпе кӑҫал тумалли ӗҫсем ҫинчен доклад туса пачӗ. Унӑн докладӗнчен тата тухса каласакансен сӑмахӗсенчен МТС иртнӗ ҫулта пачах ҫителӗксӗр ӗҫлени курӑнчӗ. Кӑҫал та МТС ку вӑхӑта ҫитсе ҫуракине кирлӗ пек хатӗрленмест. Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫ юлса пырать. Ҫак вӑхӑтрах МТС-ӑн ӗҫӗсем кӑҫал нумай пысӑкланаҫҫӗ. МТС-ӑн кӑҫал 80 колхозра ӗҫлемелле пулать.

МТС умӗнче тӑракан задачӑсене сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн кӑҫалхи ҫул Шупашкар районӗнчи машинно-тракторнӑй станципе ӑмӑртса ӗҫлеме йышӑнчӗҫ, ҫуракине ҫак ҫитес кунсенче хатӗрленсе ҫитме пулчӗҫ.

Г. ПЕТРОВ.

Шкул ачисен пулӑшӑвӗ

СЕНТӖРВӐРРИ. Шуркасси вӑтам шкулӗнче вӗренекенсем Кольцовкӑри колхозниксен чӗнӗвне вуланӑ хыҫҫӑн хӑйсем ҫине конкретнӑй обязательствӑсем илнӗччӗ.

Вӗсем хӑйсен обязательствисене чыслӑн пурнӑҫларӗҫ.

9-мӗш класра вӗренекен отличница В. Петрова Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ тӗле 100 килограмм кӗл пухма пулнӑччӗ, вӑл 522 килограмм кӗл пуҫтарса хатӗрлерӗ. Валя уроксем хыҫҫӑн колхозниксем патне кайса удобренисем тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас ӗҫре мӗнле вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен каласа кӑтартрӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн колхозниксем кӗле урама тухса тӑкми пулчӗҫ. Халӗ кашниех кӗле типӗ вырӑна пуҫтарса хума тӑрӑшать.

Н. Васильев вӗренекен 200 килограмм кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ хатӗрленӗ. Вӑл канмалли кунсенче тимӗрҫӗ лаҫҫинче машинӑсем юсанӑ ҫӗрте ӗҫлет.

Н. Алексеев юлташ уя тислӗк кӑларать. Ҫав вӑхӑтрах вӑл тырӑ вырнӑ чухне машинист пулса ӗҫлеме вӗренет.

А. РАЗИН.

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Риомри судăн ларăвĕнче Даладье малалла допрос тарăнă. Çар промышленноçне предприятийĕсене Даладье хушнă тăрăх национализациленĕ [illegible] Даладье çапла калаçнă: çар промышленноçĕн предприятийĕсене национализацилессипе çинчен калакан закона парламент [illegible] йышăннă [illegible] тенĕ. Çакă вăл питех те пысăк результатсем панă. Промышленниксем, уйрăмăн илессĕн Шнейдер, [illegible] тенĕ Даладье.

Малалла, çавăн пекех, 1938 çулта [illegible] тенĕ Даладье. [illegible]

Çав ларурах суд Гамелена та допрос тума тытăннă. Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ку допрос [illegible] çине ответлеме килĕшмен, вăл чĕмсĕр ларнă.

НЬЮ-ИОРК, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви корреспонденчĕ Риомран çапла пĕлтерет: çар предприятийĕсене национализацилеме [illegible] çав ĕçе питех те кая юлса тунă. Даладье Шнейдер-Крезо трестне çакăншăн айăплать: çав трест хăйĕн тĕрлĕ филиалĕсене национализациленĕ ытти заводсемпе, хурçă шăратакансксерсемпе, пĕрле ĕçлеме чăрмантарса тăнă. Брандăн Шатийонри заводне национализациленĕ хыççăн вăл çак завода заказ панă орудисен чертежĕсене вăрласа тарнă, çавна пула орудисем туса кăларасси чарăнса ларнă.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Гитлерăн официальнăй пичечĕ хăй Риомри процесс пирки тарăхнине пытараймасть. Риомри процесс Берлинра палăртса хунă пек мар пулса пырать, тесе çыраççĕ Гитлерăн хаçачĕсем. Çав процеса пуçараканссен шухăшĕпе, процесăн тĕп задачи — вăрçăшăн Франция айăплине кăтартса парасси пулнă. Анчах та, — тесе ÿпкелешет «Фелькишер беобахтер» хаçат, — çав задачăна пурнăçа кĕртме май килмен. Гитлерла

хасат тарăнса хайса çапла çырать: «Суд чи пысăк айăплă — Франция [illegible] — тет. [illegible]

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: кун. [illegible] Риомри процесс [illegible] «Риомри процесс [illegible] Гитлерла унăн шанкки пулса танине яр уççăн кăтартса панă. Гитлерăн ăссăр империализмĕ тĕнчене вăрçа туртса кĕртрĕ, çавăн пекех Францири пораженецсем те хăйсен çĕршывне Гитлера сутма тăрăшрĕç, вĕсем çавна турĕç те. Паллах ĕнтĕ, унашкал процесс Берлина кăмăла кайма пултараймасть, Вишири правительсене çакăншăн хыттăн асăрхаттарнă та ĕнтĕ. Анчах та çакă вăл халĕ кая юлса тунă ĕç пулчĕ. Процеса пуçаракансем тем пек çине тăрсан та, процесс Франци халăхĕ оккупантсене хирĕç тăнине тата çавăн пек хирĕç тăрасси çĕршывра нихăçан та лăпланас çуккине кăтартса парать. Петэн та, Дарлан та, Бартелеми те, Пюше те, çавăн пекех тата нумаях пулмасть çĕнĕ заложниксене персе пăрахма приказ панă Штюльпнагель генерал та халĕ ĕнтĕ нимĕн те улăштарма пултараймаççĕ».

Гитлеровецсем Эстоние ирĕксĕр нимĕçлетеççĕ

Гитлеровецсем вăхăтлăха оккупациленĕ Эстони ССР-чи халăхсене ирĕксĕр нимĕçлетеççĕ. Тарту хулинчи паллă университетран эстонец-профессорсемпе преподавательсене пурне те кăларса янă, вĕсем вырăнне нимĕçсене лартнă. Эстони банкĕсене пурне те хупнă, вĕсем вырăнне нимĕç банкĕсем уçнă. Халăха пĕрмаях ирĕксĕрлесе ĕçе яраççĕ. Темĕн чухлĕ эстонеца арестленĕ. Эстонин никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешĕвне хутшăннă пулĕ тесе шутлакансене пурне те арестлеççĕ. (ТАСС).

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине тапăнма хăтланни

Мартăн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ Мускав çине вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Пирĕн зенитнăй батарейăсем тата çĕрлехи истребительсем тăшманăн самолечĕсене сапаласа янă. Нимĕçсен хула районне вĕçсе кĕнĕ 2—3 самолечĕ нимĕн йĕркесĕр темиçе бомба пăрахса гражданла халăха пысăках мар сиен кÿнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

Англия Германи государствипе Германи халăхĕ çине мĕнле пăхни çинчен Иден тунă заявлени

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче панă ыйту çине ответлесе, Англия Германи государствипе Германи халăхĕ çине мĕнле пăхни çинчен заявлени тунă.

Çав ыйтăва Кинг-Холл панă пулнă. Вăл премьер Сталин гитлерла режимпа Германи халăхĕ хушшинче уйрăмлăх пурри пирки палăртни Британи правительствин политикинче те палăрать-и, тесе ыйтнă.

Иден çапла ответ панă: ку ыйту тĕлĕшпе Британи правительствин позицине Англи ячĕпе те, çавнашкалах ытти правительствăсемпе пĕрле те темиçе хутчен те каласа панă. Вăл политика нумаях та пулмасть г. Сталин тунă заявление хирĕçлемест.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе ирĕклĕ Францин национальнăй комитечĕ хушшинчи çыхăнусем

ВАШИНГТОН, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Уэллес Францин Лăпкă океанри владенийĕсене, çав шутрах Çĕнĕ Каледони утравне те, ирĕклĕ Францин национальнăй комитечĕ контроль туса тăнине Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем йышăнни çинчен пĕлтернине çирĕплетнĕ. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Францин Лăпкă океанри утравĕсене хÿтĕлес тĕлĕшпе çав утравсен влаçĕсемпе пĕр шутлă пулса ĕçлесе пынине кăтартса панă Уэллес.

Кăшт маларах Çĕнĕ Каледони утравĕн верховнăй комиссарĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Вашингтонри илнĕ çакăн пек заявленине пичетлесе кăларнă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви Францине Францин территорийĕсем тĕлĕшпе вĕсен тĕрĕс-тĕкĕллĕхне, вĕсен никама пăхăнманлăхне сыхласа усрас политикăна тытса пырать. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви, тесе кăтартса панă çав заявленире, Франци халăхĕ хăйĕн территорийĕн тĕрĕс-тĕкĕллĕхне сыхласа усрама, çавнашкалах тата агрессин вăйĕсене малалла хирĕç тăма тăрăшнине ăшшăн кăмăллать. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Францин территорийĕсемпе тытакан çыхăнусене çав территорисен влаçĕсем хăйсен çĕршывне пĕтĕмĕшле тăшманран хÿтĕлеме тăрăшнине кура, çавнашкалах тата çав влаçсем хăйсен территорийĕнче управлени ĕçне мĕн чухлĕ çирĕп пурнăçа кĕртсе пыма пултарнине кура туса пырать. Америка правительстви çакна йышăнать: Францин Лăпкă океанри утравсем çинчи владенийĕсем чăннипе Францин Лондонра тунă национальнăй комитетне пăхăнса тăраççĕ. Çав утравсен национальнăй комитет лартнă влаçĕсем хăйсен çĕршывне хÿтĕлес тĕлĕшпе союзниксемпе пĕр шутлă пулса ĕçлеççĕ.

Индие хÿтĕлесси çинчен лордсен палатинче сÿтсе-явни

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви ĕнер лордсен палатинче Индин хĕвеланăçĕнчи чиккисене мĕнле хÿтĕлесси пирки прениспем пулса иртни çинчен пĕлтерет.

Индипе Бирма ĕçĕсен министерствин парламентри секретарĕ герцог Девоншайр правительство ячĕпе çапла туххса каланă: Бирмăна тăшман тапăнса кĕрессине чарса лартас тата Индипе Китай хушшинчи питех те кирлĕ çыхăнăва татма парас мар тесе, Инди пĕтĕм вăй-халне хурать. Китай çарĕсем Бирмăна хÿтĕлес ĕçе хутшăнаççĕ. Халĕ Индире Китай представителĕсем, Китайра Инди представителĕсем пулмалла плансене туса хатĕрлеççĕ. Вашингтонра Инди представителĕ пулмалла тунăрамма халĕ Индипе Китай тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хушшинчи çыхăну ĕлĕкхинчен татăрах пула пуçларĕ.

Бирмăри лару-тăру питех те çивĕчленсе çитрĕ. Вырăнти условисем çар чаçĕсене вырăнтан вырăна куçарма питĕ чăрмантараççĕ, тенĕ Девоншайр хăйĕн сăмахĕнче, уйрăмах Англи авиацийĕпе Америка летчик-добровольцĕсен ăнăçуллă ĕçĕсем çинче чарăнса тăнă. Февралĕн 25—26-мĕшсем тĕлне Бирма çине тапăнма вĕçсе пынă Япони самолечĕсенчен 160 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă. Çав асăннă икĕ кун хушшинче кăна Англи авиацийĕ противникăн 61 самолетне пĕтерсе тăкнă, çав хушăра Англин хăйĕн 2 самолет çеç пĕтнĕ. Японин çĕр çинче пĕтерсе тăкнă самолечĕсем тата Япони оккупациленĕ территорисем çинче Англи самолечĕсем персе ÿкернĕ самолетсем ку хисепе кĕмеççĕ.

Пренире пуринчен малтан сăмах илнĕ лорд Страболжи Инди халăхне çине тăрсах хĕçпăшаллантарма чĕнсе каланă. «Хĕçпăшалланнă Инди халăхĕ, — тенĕ вăл, — Китай халăхĕн хĕçпăшалланнă массисем пекех, японецсене хирĕç вирлĕн кĕрешме хатĕр. 390 миллион йышлă Инди халăхĕпе 490 миллионран кая мар йышлă Китай халăхĕ, çĕршывĕсем енĕпе çывăх та пĕр пекскерсем, çарĕсем тĕлĕшпе питех те пысăк çара пĕрлештересçĕн, японецсен кашнийĕнчĕкла та чăрсăр ĕмĕчĕсене йăлтах çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ».

Англи Индие японецсенчен кăтарса хăварас тет пулсан, унăн Инди халăхне ытларах шанса тăма кирлĕ, — тенĕ лорд Веджвуд лейборист. «Пирĕн хамăрăн çара çĕршывăн шалти гарнизонĕ кăна туса тытса тăмалла мар, унпа чикĕре, вăрçăра усă курмалла. Пирĕн асрах тытас пулать: Индие çухатни — пĕтĕм Инди халăхне çухатни пулса тăрать. Индирен Япони çарĕсем çине тапăнса пырасси, Япони çарĕсене хирĕç кунта ăнăçуллă çапăçасси — пирĕнпе пĕрле хăй алла-аллăн тăрса кĕрешме кăмăл тунă, çапăçма пултаракан, хĕçпăшалланнă Инди халăхĕпе пĕрле кăна пулма пултарать», — тенĕ вăл.

Англи авиацийĕ Рено завочĕсем çине пырса тапăнни пирки

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Англири радио Англи авиацийĕ Париж çывăхĕнчи Рено завочĕсем çине ăнăçлăн пырса тапăнни çинчен тĕплĕн кăтартса парать. Пĕлтернĕ тăрăх, фугаснăй йывăр бомбăсем çурăлса кайнă чухне заводăн хăшпĕр çурчĕсем пĕтĕмĕшпех сывлăша çĕклене хăпарнă. Радио Германин вăрçă машинишĕн Рено завочĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тănине кăтартса парать. Рено, Ситроен, Пэжо завочĕсем тата ыттисем те пĕтĕмпех гитлерла Германи валли ĕçлесе тăраççĕ. 1941 çулта нимĕçсем Францире кашни уйăхрах пиншер грузовиксем илсе тăнă, çакна пула ĕнтĕ Германири автомобиль завочĕсем пĕтĕмпех танксем тăвасси çине куçма пултарнă. Грузовиксемсĕр пуçне, Рено завочĕсем нимĕçсем валли авиаци моторĕсем, танксем, газогенераторсем туса кăларнă. Рено завочĕсенче талăкĕпех пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ.

Лондонри радио Франция валли панă хăйĕн передачинче çапла палăртать: çакăн пек вĕçсе пырса тапăнни Англия Франци çине пăхассине улăштармасть, вăл тапăну Франци халăхне хирĕç пулман. Франци завочĕ çине бомбăсем пăрахни вăрçă ĕçĕнчи уйрăм тĕллевсем пирки пулнă, мĕншĕн тесен çав завод гитлерла Германи валли ĕçлесе тăнă.

НОРВЕГИРЕ КВИСЛИНГОВЕЦСЕН ИРСĔР ĔÇĔСЕНЕ ТАРĂХСА ÇИТНИ

НЬЮ-ИОРК, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Норвегин Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи государствăн дипломатиллĕ миссийĕ Норвегирен çакăн пек хыпарсем илнĕ: Квислингăн (Норвегири шкул ачисене 10 çулхисенчен пуçласа 18 çула çитнисем таран пурне те обязательнăй йĕркепе çамрăксен квислингла организацине кĕртме хушакан декретне хирĕç протестлесе, Норвеги чиркĕвĕн 7 епископĕ те отставкăна тухнă.

Квислингăн тепĕр приказĕ те Норвеги халăхне питĕ тарăхтарса çитерне. Ку приказра «Норвегире пĕтĕм халăха вĕрентес ĕçе çĕнĕ йĕркепе килĕшÿллĕ туса хума» хушнă. Çав декрет тăрăх, Норвегире учительсен пурин те учительсен квислингла союзне кĕмелле. Гитлер «пукане йĕн» çак сутăнчăкла çĕнĕ актне хирĕç хыттăн протестлесе, Норвегире 9.000 учитель, кашни уйрăм заявленисем çырса, влаçсем патне çырусем янă. Çакăн пек протестленипе урса кайнă Квислинг Осло, Акер т. ыт. хуласенчи учительсем патне янă çырусене пĕрне те çитерсе памалла мар тесе приказ панă. Ĕлĕк судья пулнă Бонвевьене, влаçсем патне йĕркесĕрлĕхсем çине тарăхса çыру çырнăшăн, гестапо агенчĕсем арестленĕ.

Чехсене ирĕксĕр ĕçлеме Германие хăваласа кайни

СТОКГОЛЬМ, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Германире ĕç вăйĕ çитменни куллен кун ытларах палăрса пырать. Халĕ ку ыйту питĕ çивĕчленсе çитнĕ пирки гитлеровецсем чрезвычайнăй мерăсем йышăнаççĕ. Халĕ çемьесĕр чехсене — арçынсене те хĕрарăмсене те пурпĕрех — Германие ирĕксĕрлесе ĕçе хăваласа каймалла тунă. «Чехипе Моравин протекторатĕнче» çемьесĕр чехсене повесткăсем панă. Çав повесткăсенче вĕсене чĕнни-чĕнмен тÿрех Германие ĕçлеме тухса кайма хатĕр тăма хушнă.

«Протекторатран» нимĕçсене чылайĕшне Германие чĕнсе илнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРЕВĔСЕМ.

НЬЮ-ИОРК, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Батаан çурутравĕнче (Филиппин) Америка авиацийĕ Японин суднисене атакăланă. Японецсен сиенленнĕ суднисем хушшинче 10.000 тонна водоизмещениллĕ пĕр пароход, 8.000 тонна водоизмещениллĕ тепĕр пароход, 100-шер тонна водоизмещениллĕ моторлă икĕ судно пулнă.

АНГЛИ ПĔЛТЕРЕВĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Англин Бирмăри командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Японин войскисем Ситтанг юханшывĕ урлă каçнă.

Австрали командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: мартăн 4-мĕшĕнче Японин авиацийĕ Дарвин хулине вĕçсе пырса тапăннă, кунта вăл аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Аэродрома хăшпĕр сиенсем кÿнĕ. Жертвăсем çук. Мартăн 5-мĕшĕнче ирхине Çĕнĕ Гвинея утравĕнчи Моресбей портне Япони авиацийĕ икĕ хут вĕçсе пырса тапăннă. Жертвăсем çук.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Ява утравĕ çинче пур çĕрте те Голланди Индийĕн войскисем японецсене хирĕç çапăçаççĕ. Япони войскисем Голланди Индийĕн войскисенчен нумай йышлăрах, вĕсем пĕрмаях малалла куçса пыраççĕ.

Утравăн хĕвеланăçĕнчи пайĕнче Голланди Индийĕн войскисем Кравангăпа тата Тангерангăпа хăварнă, вĕсене халĕ противник йышăннă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРЕВĔСЕМ

ТОКИО, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, мартăн 2-мĕшĕнче Япони войскисем Филиппинри Минданао утравĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче ларакан Замбонга хулине йышăннă. Ява утравĕ çинче Япони войскисем Батави çывăхĕнчи пункт патне çитнĕ.

Японипе Китай вăрçи

Чжэцзян провинцинче Китай войскисем Юхан тата Фуян хулисенче (Ханьчжоуран хĕвеланăç еннерех) японецсен гарнизонĕсене атакăланă. Атака ăнăçлă пулнă. Хубей провинцинче Китай войскисем японецсен Данян районĕнчи позицийĕсене атакăланă. Ку атакăна японецсем кĕтмен, Китай войскисем ăна сасартăк пуçласа янă. Çапăçусем темиçе кун хушши пынă. Японецсен каялла чакмалла пулнă. (ТАСС, мартăн 5-мĕш).

Пĕлтерÿ

1942 çулта мартăн 7-мĕшĕнче 8 сехетре каçхине Советсен çурчĕн заседанисен залĕнче Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе хулари парти, совет, общественлă организацисен тата хĕрарăмсен активĕн чаплă ларăвĕ пулать.

Ларура хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ, СССР Верховнăй Совет депутачĕ **З. А. Андреева** юлташ доклад туса парать.

Чаплă лару хыççăн концерт пулать.

Билетсене ВКП(б) Хула комитетĕнче параççĕ.

ВКП(б) Хула Комитечĕ.
Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн Исполкомĕ.

Райçутĕç пайĕсен заведующийĕсемпе педучилище директорĕсен республикăри канашлăвĕ

Мартăн 2—3-мĕш кунĕсенче Шупашкарта райçутĕç пайĕсен заведующийĕсемпе педучилище директорĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу икĕ ыйту сÿтсе-ярĕ: «Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕн итогĕсемпе шкул ĕçĕнчи малашнехи задачăсем çинчен» тата «Политпросвет учрежденийĕсен çураки вăхăтĕнчи задачисем çинчен».

Пĕрремĕш ыйтупа канашлу çутĕç халăх комиссарĕн Макаров юлташăн докладне итлерĕ. Макаров юлташ республикăри шкулсем отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче вĕренÿ çулне хатĕрленсе пĕрремĕш çурçул хушшинче мĕнле ĕçленине тĕплĕн çутатса пачĕ.

Республикăри шкулсем, вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, пĕтĕмĕшпе илсен, 1941—42 вĕренÿ çулне çителĕклĕ хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Вĕренÿ çулĕ пуçланнă çĕре плана палăртса хунă шкул çурчĕсене юсаса çитернĕ, пĕрремĕш çурçула çителĕклĕ тетрадьсем, çырмалли хатĕрсем хатĕрленĕ, 20 тĕслĕ учебник кăларса панă, 200 пине яхăн кивĕ учебниксене илсе хатĕрленĕ, учительсен кадрĕсене кирлĕ таран хатĕрленĕ.

Вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче республикăра 1.025 шкул ĕçленĕ, вĕсенче 180 пине яхăн ача вĕреннĕ. I—IV-мĕш классенче обязательнăй йĕр[illegible]

тельсем вĕрентÿ пахалăхне чакарман, вĕренекенсем вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси иртнĕ вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕпе танлаштарсан чакман кăна мар, ÿснĕ те. Вĕренекенсен 25 проценчĕ вĕренÿ отличникĕсем е ударникĕсем пулса тăраççĕ, вĕренÿре ĕлкĕрсе пыманнисен хисепĕ 1 процента çити чакнă.

Программа материалне отечественнăй вăрçăпа таччăн çыхăнтарса пани, вĕренекен ачасенче совет патриочĕн паха качествисене çитĕнтерсе пыни, вĕренекенсене çар ĕçне, ялхуçалăх ĕçне вĕрентни кăçалхи вĕренÿ çулне иртнĕ вĕренÿ çулĕсенчен пысăкрах уйăрса тăракан пахалăх пулса тăрать.

Макаров юлташ уйрăм предметсене вĕрентекен учительсем программа материалне отечественнăй вăрçăпа, оборона ыйтăвĕсемпе таччăн çыхăнтарса пынине тĕплĕн çутатса пачĕ. Уйрăмăнах Патăрьелĕнчи вăтам шкулта географие вĕрентекен Толстов, Ярапайкассинчи тулли мар вăтам шкулта (Ишлей р.) вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен учительница-орденоносец Тетерина ĕçĕсене палăртрĕ.

Истори, конституци, литература предмечĕсем вĕренекенсене патриотизмла воспитани парас тĕлĕшрен уйрăмăнах паха предметсем пулса тăчĕç.

Шкулсем, учительсемпе шкул ачисем кăçал общество ĕçĕнче те лайăх[illegible]

çапса илнĕ. Кашни районра шкул ачисемпе пионерсен вăйĕпе темиçе вуншар тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Учительсемпе шкул ачисем фронта укçа-тенкĕпе, ăшă япаласемпе, посылкăсемпе нумай пулăшнă.

Анчах шкул ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылаях-ха. Чылай шкулсем вĕренме тивĕçлĕ ачасене вĕренĕве явăçтарса çитереймен тата вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче вĕренме пăрахнă ачасен йышĕ те чылаях.

Шкулсенче тасалăх çителĕксĕр. Чылай çĕрте вĕренекенсем, сивĕ пирки, классенче тумтирпе лараççĕ.

Ялхуçалăхне вĕрентес ĕçре те çитменлĕхсем сахал мар. Хăшпĕр шкулсенче ку ĕçе кая юлса тытăннă (Советски районри Шĕмшешри вăтам шкул), Ишлей районĕнчи шкулсенче теорине практикăран уйăрса вĕрентни, вĕренÿре вырăнти условисене шута илменни пулнă.

Шкулсен, учительсен ĕçне тĕрĕслесе тăрасси, учительсене кирлĕ таран пулăшу парасси чылай çĕрте çителĕксĕр пулса пырать. Сăмахран, Советски райçутĕç пайĕ пĕрремĕш çурçул хушшинче мĕнпурĕ те 5 шкул ĕçне анчах тĕрĕсленĕ.

Учительсене политикăллă воспитани парасси çине пĕрремĕш çурçулта çителĕклĕ çавăрăнса пăхман. Учительсен профсоюзĕн обкомĕ те, райкомĕсем те учительсене воспитани парас, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса пырас тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçленĕ.

Шкулсен çителĕклĕ сăлтавсăр вĕренме пăрахнисене çывăх вăхăтрах вĕренĕве явăçтармалла. Ачасене шкула пĕр сиктермесĕр çÿреме, ăнăçлă вĕренсе пыма кирлĕ условисене туса парас пулать. Урăх облаçсемпе республикăсенчен куçса килнĕ ачасем валли, фронта кайнисен ачисем валли шкулсенче интернатсем уçмалла, вĕри апат çитермелле тумалла. Вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн пахалăхне кунсерен хăпартса пымалла. Пĕтĕм шкул ĕçне вăрçă вăхăтĕпе килĕшÿллĕн йĕркелесе çитерес пулать. Ачасене ялхуçалăх ĕçне вĕрентессине ăнăçтарса пырса, шкул енчен колхозсене пулăшассине вăйлатмалла тата шкулсен çĕр участокĕсемпе çителĕклĕ усă курмалла. Шкул ачисене çар ĕçне вĕрентес ĕçри халиччен пулнă çитменлĕхсене пĕтерсе, всеобуч программине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа вĕçлесе çитермелле.

Пĕрремĕш ыйтупа пренире 15 çын тухса каларĕç.

— Учительсен составĕ кăçал чылаях çĕнелнĕ пирки, методика ĕçне уйрăмăнах вăйлатни кирлĕ. Учительсем хушшинче халĕ те ĕç дисциплинине пăсакансем тĕл пулаççĕ. Учительсен профсоюзĕ учительсен кадрĕсемпе япăх ĕçлет, профсоюз ĕçĕ курăнмасть. Методика пĕрлешĕвĕсен, производство канашлăвĕсен ĕçне чĕртсе ямалла, вĕсенче методика ыйтăвĕсемсĕр пуçне политикăллă докладсем, лекцисем лартса сÿтсе-явмалла, — терĕ ЧАССР Совнаркомĕн Председателĕн заместителĕ Евлампьев юлташ.

сем çинчен тунă докладра вуламалли çуртсен, колхоз клубĕсен, культура çурчĕсен ĕçĕсен черетлĕ задачисене кăтартса пачĕ. Политпросвет учрежденийĕсен колхозниксене агротехникăна вĕрентес ĕçе анлăн сарса ямалла, колхозра стахановла ĕçĕн меточĕсене ăнлантармалла, кашни колхознике харпăрхăй колхозĕн производство планĕпе тĕплĕн паллаштармалла. Вуламалли çуртсем чăннипех массăллă-политикăллă ĕçĕн центрĕсем пулса тăмалла.

Иккĕмĕш ыйтупа пренире 7 çын тухса каларĕ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ хăйĕн сăмахĕнче Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклад хыççăн политпросвет учрежденийĕсем пысăк ĕçсем тунине палăртрĕ.

— Анчах политпросвет учрежденийĕсенчен чылайĕшĕ ялти практикăллă ĕçпе çителĕксĕр çыхăнса тăраççĕ. Райçутĕç пайĕсем политпросвет учрежденийĕсен ĕçĕсемпе сахал интересленеççĕ, вĕсене тивĕçлĕ кадрсем парас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ.

Малалла Ахазов юлташ халăх хушшине литература сарасси, вуламалли çуртсене, шкулсене кирлĕ кĕнекесем тăратасси çинче чарăнса тăчĕ, кĕнекесемпе сутă тăвас тĕлĕшпе Райпотребсоюзсем пачах çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Хăйĕн сăмахĕнче Ахазов юлташ уйрăмăнах ача çурчĕсен, ача садĕсен ĕçĕн пахалăхне хăпартасси çинче чарăнса тăчĕ, ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене пулăшу парассине анлăн сарса пымаллине паллă турĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО-ТЕАТР
7—8 МАРТА
праздничные концерты
ПО СПЕЦИАЛЬНОЙ ПРОГРАММЕ.
В АНТРАКТАХ ТАНЦЫ.
Начало в 11 час. вечера.
Касса с 2 час. дня.

ТРЕБУЮТСЯ:
Кузнецы-молотобойцы,
Кочегары,
Электросварщики,
Слесаря-водопроводчики,
Слесаря-монтажники,
Такелажники
и подсобные рабочие.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Чапаевский поселок, телефон № 0—26, Отдел кадров.

Центральному Совету Осоавиахима Чувашской АССР требуются на работу БУХГАЛТЕРА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—90, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.